27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
15
ЭРНЕКУН
182(6677) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт çарӗсем паян, сентябрӗн 13-мӗшӗнче, вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн нимӗçсен **НАРЕВ** шывӗ çинчи оборонин тӗреклӗтнӗ паха пунктне — **ЛОМЖА** хулипе крепоçне турта илнӗ.

ЛОМЖА хулипе крепоçне туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче **ГРИШИН** генерал-лейтенантӑн, **СМИРНОВ** генерал-майорӑн, **ТЕРЕНТЬЕВ** генерал-майорӑн, **КУСТОВ** генерал-майорӑн, **СУПРУНОВ** полковникӑн, **КРАСНОШТАНОВ** генерал-майорӑн, **КИРИЛЛОВ** генерал-майорӑн, **КРОНИК** генерал-майорӑн, **ТАРАСОВ** полковникӑн, **СЛИЦ** генерал-майорӑн çарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн **СОКОЛЬСКИН**, артиллери генерал-майорӗн **РАЗИНЦЕВӐН**, артиллери генерал-майорӗн **ДЕГТЯРЕВӐН**, **МИХНО** полковникӑн, **ПАНКОВ** полковникӑн, **КАМИНСКИЙ** полковникӑн, **КОРОЛЕВ** полковникӑн, **РЫБКИН** полковникӑн, **УШАКОВ** полковникӑн, **ТЮРИН** полковникӑн, **НОСЫРЕВ** полковникӑн артиллерисчӗсем; **РОДИОНОВ** полковникӑн, **ГРДЗЕЛИШВИЛИ** подполковникӑн, **РОЖКОВ** подполковникӑн, **ШЕВЧЕНКО** подполковникӑн, **ПОВАРОВ** подполковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **ВЕРШИНИНӐН**, авиаци генерал-майорӗн **ГЕТМАНӐН**, **СМОЛОВИК** полковникӑн, **ВОЛКОВ** полковникӑн, **ВУСС** полковникӑн, **ПОКАЕВА** полковникӑн, **СТАРОВОЙТОВ** подполковникӑн, **ШЕВЦОВ** майорӑн, **КОЛОМИН** подполковникӑн, **АРБАТОВ** майорӑн, **БАУТИН** подполковникӑн, **КАТРУХ** подполковникӑн, **ФЕДОТОВ** майорӑн, **БАРДЕЕВ** подполковникӑн, **ЕЛИСЕЕВ** подполковникӑн, **СОКОЛОВ** подполковникӑн летчикӗсем; **ТРЕТЬЯКОВ** полковникӑн, **МИРОТВОРСКИЙ** полковникӑн, **БОНДОЗ** майорӑн, **ШЕПЕЛЕВ** майорӑн саперӗсем; çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн **БОРЗОВӐН**, çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн **НОВАРЧУКӐН**, **МИХАЙЛОВ** полковникӑн, **КОРБУТ** подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ çӗнтерӗве ялан лӑха палӑртса хӑварас тесе, **ЛОМЖА** хулипе крепоçне туртса илессишӗн пынӑ çапӑçусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене **«ЛОМЖИНСКИ»** тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 13-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван çӗршыв столици **МУСКАВ**, çӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа вунИкӗ хут пӗр харӑс персе, **БЕЛОРУССИРИ** 2-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, **ЛОМЖА** хулипе крепоçне туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ЛОМЖА** хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ çапӑçусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТАП.**

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрӗн 13-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт çарӗсем, нумай вӑхӑт хушши çине тӑрса çапӑçнӑ хыççӑн, паян, сентябрӗн 14-мӗшӗнче, **ПРАГА** крепоçне — **ВАРШАВА** çывӑхӗнчи хулана тата нимӗçсен **ВИСЛА** шывӗн хӗвелтухӑç çыранӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне — туртса илнӗ.

ПРАГА крепоçне туртса илессишӗн çапӑçнӑ чухне **ГУСЕВ** генерал-лейтенантӑн, **БЕРЛИНГ** генерал-лейтенантӑн, **КУЗЬМИН** генерал-майорӑн, **ПОЗДНЯК** генерал-майорӑн, **ГЕРВАСИЕВ** полковникӑн, **ВЫДРИГАН** полковникӑн, **ЗАИКИН** генерал-майорӑн, **ЧЕРНОВ** генерал-майорӑн, **ТУРЬЕВ** полковникӑн, **ГЛУШКО** полковникӑн, **БЕВЗЮК** генерал-майорӑн, **МАКСИМУК** подполковникӑн, **СЕНИЦКИЙ** подполковникӑн, **ПЕТРОВИЧ** полковникӑн çарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн **КАЗАКОВӐН**, артиллери генерал-майорӗн **ГОГИНӐН**, артиллери генерал-майорӗн **МОДЗЕЛЕВСКИН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ПОЗДНЯКОВӐН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ШАМШИНӐН**, **РАСКОВ** майорӑн, **ЗРАЖЕВСКИЙ** полковникӑн, **КУЗНЕЦОВ** полковникӑн, **СОЛОМИЕНКО** полковникӑн, **ГУТИН** полковникӑн, **ЖИГАРЕВ** полковникӑн, **ИВАНОВ** полковникӑн, **ВАЛЬЧЕНКО** полковникӑн, **ФАНТАЛОВ** полковникӑн, **НИКИТИН** полковникӑн, **КОПЕЛЕВ** полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн **ЛЯРСКИЙӖН**, **РОДИЧЕВ** полковникӑн, **ВИНОГРАДОВ** полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн **ПОПОВӐН**, **ПИСКАРЕВ** полковникӑн, **СТЕПАНОВ** полковникӑн, **ТУРЕНКОВ** полковникӑн, **МЕЖИЦАН** генерал-майорӑн, **ПИВНЕВ** полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **РУДЕНКӐН**, **РАССКАЗОВ** полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **КОМАРОВӐН**, **ХРАМЧЕНКО** подполковникӑн, **БЕРКАЛЬ** полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **ДЗУСОВӐН**, **ИСАЕВ** подполковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **ТАТАНАШВИЛИН**, **ВОРОБЬЕВ** капитанӑн летчикӗсем; **КОМАРОВ** полковникӑн, **КИСЕЛЕВ** полковникӑн саперӗсем; **СОЛОВЬЕВ** полковникӑн, **СУЧЕК** полковникӑн, **МАЛИНОВСКИЙ** полковникӑн, **ВАЙСЕР** полковникӑн, **ХОМЕНКО** майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ çӗнтерӗве ялан лӑха палӑртса хӑварас тесе, **ПРАГА** крепоçне туртса илессишӗн çапӑçнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене **«ПРАЖСКИ»** тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, сентябрӗн 14-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван çӗршыв столици **МУСКАВ**, икçӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа çирӗм хут пӗр харӑс персе, **БЕЛОРУССИРИ** 1-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, çав шутрах поляксен **БЕРЛИНГ** генерал-лейтенант ертсе пыракан 1-мӗш армин çарӗсене те, **ПРАГА** крепоçне туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ПРАГӐНА** ирӗке кӑларассишӗн çапӑçнӑ çӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТАП.**

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 çулхи сентябрӗн 14-мӗшӗ.

Хӗрлӗ Çар Яссы хулипе Кишинев хули патӗнче нимӗç çарӗсене çавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнин итогӗсем

Кӑçалхи сентябрӗн 2-мӗшӗпе 3-мӗшӗнче пирӗн çарсем **БАКЭУ** хули районӗнче Яссы хулипе Кишинев хули патӗнче çавӑрса илнӗ фашистла нимӗç çарӗсен **ЮЛАШКИ** ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн çав ушкӑнне пӗтерсе тӑкни пирӗн çарсен Яссы хулипе Кишинев патӗнчи операцин юлашки тапхӑрӗ пулса тӑрать. Августӑн 20-мӗшӗнчен пуçласа сентябрӗн 3-мӗшӗччен кӑнтӑрта наступлени туса пынӑ вӑхӑтра **УКРАИНӐРИ** фронт çарӗсем, арми генералӗ (халӗ Совет Союзӗн Маршалӗ) **МАЛИНОВСКИЙ** командир пулса ертсе пынипе, тата **УКРАИНӐРИ** 3-мӗш фронт çарӗсем, арми генералӗ **ТОЛБУХИН** командир пулса ертсе пынипе, нимӗçсен 6-мӗшпе 8-мӗш армийӗсене пӗтӗмӗшпех çавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ. Çак икӗ арми нимӗç çарӗсен **ФРИСНЕР** генерал-полковник командир пулса ертсе пынӑ «Кӑнтӑр Украина» ятлӑ ушкӑнӗнче тӑнӑ.

Çапла вара нимӗç çарӗсене Яссы хулипе Кишинев патӗнче пӗтӗмӗшпех çавӑрса илнӗ. Ку операци стратеги енчен тата вӑрçӑпа политика тӗлӗшӗнчен çак вӑрçӑри чи пысӑк та чи паллӑ операцисенчен пӗри пулса тӑрать.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем çав ӑнӑçлӑ наступленире нимӗçсен çак соединенийӗсемпе чаçӗсене (Румыни çарӗсене шута кӗртмен) çавӑрса илсе пӗтерсе тӑкнӑ: нимӗçсен 62-мӗш, 79-мӗш, 106-мӗш, 161-мӗш, 257-мӗш, 258-мӗш, 282-мӗш, 294-мӗш, 302-мӗш, 320-мӗш, 335-мӗш, 370-мӗш, 376-мӗш тата 384-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене, нимӗçсен 1-мӗш зенитнӑй дивизине, штурмлакан тупӑсен 228-мӗш, 243-мӗш, 286-мӗш, 325-мӗш, 259-мӗш, 278-мӗш, 732-мӗш тата 911-мӗш бригадисене, главнӑй командованин резервӗнчи 40-мӗш, 46-мӗш, 52-мӗш, 70-мӗш, 77-мӗш, 127-мӗш, 140-мӗш, 149-мӗш, 612-мӗш, 792-мӗш, 818-мӗш / артиллери полкӗсене, 721-мӗш, 1.007-мӗш, 1.009-мӗш, 1.160-мӗш уйрӑм противотанковӑй дивизионсене, главнӑй командованин резервӗнчи 40-мӗш, 86-мӗш, 194-мӗш, 732-мӗш, 735-мӗш, 737-мӗш тата 906-мӗш уйрӑм артиллери дивизионӗсене, 52-мӗш минометнӑй полка, главнӑй командованин резервӗнчи 278-мӗш, 300-мӗш тата 707-мӗш зенитнӑй артиллери дивизионӗсене, 4-мӗш самокатнӑй полка, 999-мӗш крепостной полка, «Нойхамер» ятлӑ гренадерски полка, уйрӑм çыхӑну полкне, 52-мӗш, 112-мӗш, 130-мӗш, 152-мӗш, 154-мӗш, 602-мӗш строительнӑй батальонсене, икӗ çыхӑну батальонне, 318-мӗшпе 522-мӗш охраннӑй батальонсене, 7-мӗш, 17-мӗш, 500-мӗш, 560-мӗш штрафной батальонсене, главнӑй командованин резервӗнчи 27-мӗш, 219-мӗш, 246-мӗш, 541-мӗш, 651-мӗш саперлӑй батальонсене, танксене пемелли 472-мӗш батальона тата «Осназ» ятлӑ 794-мӗш батальона.

Унсӑр пуçне тата **УКРАИНӐРИ** 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсен 15-мӗш, 46-мӗш, 76-мӗш, 153-мӗш, 306-мӗш пехотнӑй дивизийӗсене, 10-мӗш моторизованнӑй дивизине тата 13-мӗш танковӑй дивизине аркатса тӑкнӑ.

Августӑн 20-мӗшӗнчен пуçласа сентябрӗн 3-мӗшне çитиччен пынӑ наступлени вӑхӑтӗнче **УКРАИНӐРИ** 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем фашистла нимӗç çарӗсене çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен çакӑн пек çухатусем тӳстернӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем — 298, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем— 490, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—1.500, автомашинӑсем — 15.000.

Çапӑçу хирӗнче нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен 150.000 вилли ытла выртса юлнӑ. Вилнисем хушшинче çак генералсен ӳчӗсене тупнӑ: нимӗçсен 4-мӗш армейски корпус командирӗн—пехота генералӗн **МИТАН**, нимӗçсен 44-мӗш армейски корпус командирӗн—пехота генералӗн **МЮЛЛЕРАН**, нимӗçсен 384-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн де **САЛЕНГРЕ-ДРАББЕ** генерал-лейтенантӑн, нимӗçсен 294-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн **ЭЙХШТЕДТ** генерал-майорӑн, нимӗçсен 15-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн 6-мӗш арми командующийӗн тыл тӗлӗшпе ӗçлекен заместителӗн **ШПЕРЛЬ** генерал-майорӑн, нимӗçсен 320-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн **ШИЛЬ** полковникӑн, нимӗçсен 306-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗн **ГЛЮНКЕ** полковникӑн ӳчӗсене тупнӑ.

Çав вӑхӑт хушшинчех **УКРАИНӐРИ** 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсенчен çакӑн пек трофейсем **ТЫТСА ИЛНӖ:** самолетсем—40, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—340, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—2.000 ытла, автомашинӑсем—18.000 яхӑн.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем 106.600 нимӗç салтакӗпе офицерне **ТЫТКӐНА ИЛНӖ.** Вӗсем хушшинче — нимӗçсен 7-мӗш армейски корпус командирӗ артиллери генералӗ **ШНЕЙЛ**, нимӗçсен 32-мӗш армейски корпус командирӗ **КРОССЕЛЬ** генерал-лейтенант, 6-мӗш арми командующийӗн тыл тӗлӗшпе ӗçлекен заместителӗ **БУРКХАРДТ** генерал-лейтенант, нимӗçсен 62-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ **ТРОНЬЕ** генерал-майор, нимӗçсен 79-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ **ВАЙНКНЕХТ** генерал-лейтенант, нимӗçсен 282-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ **ФРЕНКИНД** генерал-майор, нимӗçсен 302-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ фон **БОГЕН** генерал-майор, нимӗçсен 370-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ фон **ГЮЛЬЗЕН** генерал-майор, **КИШИНЕВ** хулин коменданчӗ фон **ДЕВИТЦ** генерал-майор, **ЯССЫ** хулин коменданчӗ **ШТИНГЕЛЬ** генерал-майор, нимӗçсен 376-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ **ШВАРЦ** генерал-лейтенант, нимӗçсен 106-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ **РИНГЕНБЕРГ** полковник, нимӗçсен 258-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ Рудольф **ГИЛЬЧЕР** полковник, нимӗçсен 76-мӗш пехотнӑй дивизи командирӗ фон **БИССИНГ** полковник, нимӗçсен 1-мӗш зенитнӑй дивизи командирӗ **СИМОН** полковник. Унсӑр пуçне тата пирӗн çарсем нимӗçсен 13-мӗш танковӑй дивизи командирне **ТРЕГЕР** генерал-лейтенантпа нимӗçсен 153-мӗш пехотнӑй дивизи командирне **БАЙЕР** генерал-лейтенанта, хӑйсен çарӗсене пӑрахса Болгари çӗрне тарнӑскерсене, тыткӑна илнӗ.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем, пӗр-пӗринпе таччӑн çыхӑнса тунӑ наступленире фашистла нимӗç çарӗсен кӑнтӑрти группировкине аркатса тӑкса, нимӗçсене çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсем тӗлӗшпе çакӑн пек çухатусем тӳстернӗ: самолетсем — 338, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 830, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—3.500, автомашинӑсем—33.000 пӗтерсе тӑкнӑ тата тытса илнӗ. Нимӗçсен 256.000 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ е тыткӑна илнӗ.

Çапла ӗнтӗ, Хӗрлӗ Çар нимӗçсен Яссы хулипе Кишинев патӗнчи группировкине çавӑрса илсе пӗтерсе тӑкас тӗлӗшпе туса ирттернӗ операцире, **УКРАИНӐРИ** 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем Хӗрлӗ Çарӑн **ВЕРХОВНАЙ ГЛАВНОКОМАНДОВАНИЙӖН** планӗ тӑрӑх хӑюллӑ та ӑста туса ирттернӗскерӗнче, нимӗçсен 15 дивизине пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ, çав дивизисен пӗр подразделенийӗ те çавӑрса илнӗ ункӑран çӑлӑнса тухма пултарайман.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсен вӑрçӑри ӗçӗсене Верховнӑй Главнокомандовани Ставкин представителӗ Совет Союзӗн Маршалӗ **ТИМОШЕНКО** çыхӑнтарса, килӗштерсе пынӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Румынипе перемири çинчен килӗшӳ тунӑ

Сентябрӗн 10—12-мӗшӗсенче Мускавра Совет Союзӗн, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисен интересӗсемшӗн тӑраканскерсен, представителӗсем, пӗр енчен, тата Румыни правительствин делегацийӗ, тепӗр енчен, хутшӑннипе Румынипе перемири çинчен килӗшӳ тӑвас ыйту тӑрӑх каласусем пулса иртнӗ. Каласусене Совет Союзӗ енчен—В. М. **МОЛОТОВ**, А. Я. **ВЫШИНСКИЙ**, И. М. **МАЙСКИЙ**, Д. З. **МАНУИЛЬСКИЙ**, Н. В. **НОВИКОВ**, генерал В. П. **ВИНОГРАДОВ**, контр-адмирал В. Л. **БОГДЕНКО**, Великобритани енчен — Посол **КЕРР** господин, США енчен — Посол **ГАРРИМАН** господин хутшӑннӑ. Румыни представителӗсем пулса, каласусене Румыни правительствин уполномоченнӑйӗсем — Л. **ПАТРАШКАНУ**, генерал Д. **ДАМАЧАНУ**, Б. **СТИРБЕЙ**, Г. **ПОПП** господинсем хутшӑннӑ.

Каласусем сентябрӗн 12-мӗшӗнче Румынипе перемири çинчен тунӑ Килӗшӗве алӑ пуснипе вӗçленнӗ. Перемири çинчен тунӑ Килӗшӗве Совет Союзӗн, Великобританипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем полномочи панипе Совет Союзӗн Маршалӗ Р. Я. **МАЛИНОВСКИЙ** алӑ пуснӑ. Румыни енчен Килӗшӗве Л. **ПАТРАШКАНУ**, генерал Д. **ДАМАЧАНУ**, Б. **СТИРБЕЙ**, Г. **ПОПП** господинсем алӑ пуснӑ.

Аяларахра перемири çинчен тунӑ Килӗшӳ пичетленет.

Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисем пӗр енчен тата Румыни Правительстви тепӗр енчен пулса пӗр-пӗринпе перемири çинчен тунӑ КИЛӖШӲ

Румыни Правительстви тата унӑн Главнӑй Командованийӗ, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑна, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсене тата Пӗрлешнӗ ытти Нацисене хирӗç туса пыракан вӑрçӑра Румыни поражени тӳснӗ факта йышӑнса, çӳлерехре асӑннӑ Союзлӑ виçӗ державӑн, мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисен интересӗсемшӗн тӑраканскерсен, Правительствисем лартнӑ перемири условийӗсене йышӑнать.

Çӳлерехре кӑтартса панине шута илсе, Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин представителӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Р. Я. Малиновский, мӗнпур Пӗрлешнӗ Нацисен интересӗсемшӗн тӑракан Совет Союзӗн, Пӗрлешӳллӗ Королевствӑн тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствисенчен çав ӗçе тума тивӗçлӗ полномочи илнӗскер, пӗр енчен, тата Румыни Правительствипе унӑн Главнӑй Командованийӗн представителӗсем — Государство Министрӗ тата Юстици Министрӗ г-н Л. Патрашкану, Шалти Ӗçсен Министрӗ, унӑн величестви королӗн Адьютанчӗ г-н Д. Дамачану, г-н Б. Стирбей, г-н Г. Попп, тивӗçлӗ полномочи илнӗскерсем, тепӗр енчен, аяларахра кӑтартнӑ çак условисене алӑ пуснӑ:

1. 1944 çулхи августӑн 24-мӗшӗнче 4 сехетрен пуçласа, Румыни ССР Союзне хирӗç туса пыракан вӑрçӑ ӗçӗсене вӑрçӑн пур вырӑнӗсенче те пӗтӗмӗшпех чарса лартрӗ, Пӗрлешнӗ Нацисене хирӗç туса пыракан вӑрçӑран тухрӗ, Германипе тата унӑн сателличӗсемпе тытса тӑракан çыхӑнусене татрӗ, хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхне тата хӑй тӗллӗн пурӑнас йӗркине юсаса ура çине тӑратас шутпа, Союзлӑ державӑсем енне тӑрса, Германипе Венгрие хирӗç вӑрçа тухрӗ те çак вӑрçа малалла туса пырать, çак ӗç валли вӑл 12 пехотнӑй дивизирен кая мар, çав дивизисене вӑйлатмалли хатӗрсемпе пӗрле, кӑларса тӑратать.

Румынин хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсем, ку шутра тинӗс-çар тата сывлӑш-çар флочӗсем те, Германипе Венгрие хирӗç вӑрçӑ ӗçӗсене Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани пӗтӗмӗшлӗн ертсе пынипе туса пыраççӗ.

2. Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ Германипе Венгрин Румыни территорийӗ çинче тӑракан хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене хӗçпӑшалсӑрлантарса тытса чарас, çавӑн пекех тата асӑннӑ икӗ çӗршывӑн кунта тӑракан граждӑнӗсене те тытса чарас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма пулаççӗ. (2-мӗш статья çумне Хушса çырнине пӑхӑр).

3. Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ совет çарӗсене тата союзниксен ытти çарӗсене Румыни территорийӗ тӑрӑх, вӑрçӑ лару-тӑрӑвӗ ыйтнине кура, кирек-хӑш еннелле те куçса çӳреме май туса параççӗ, çакӑнпа пӗрлех Румыни правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ çавӑн пек куçса çӳрес ӗçе типçӗр çинче те, шыв çинче те, сывлӑшра та куçса çӳремелли хӑйсен хатӗрӗсене парса тата хӑйсен шутӗнчен пур енӗпе те пулӑшса тӑраççӗ. (3-мӗш статья çумне Хушса çырнине пӑхӑр).

4. ССР Союзӗпе Румыни хушшинчи государство чикки 1940 çулхи июнӗн 28-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Румыни йышӑннӑ Килӗшӳ тӑрӑх юсанса йӗркеленет.

5. Румыни правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ советӑн тата союзниксен тыткӑна лекнӗ çар çыннийӗсене, çавӑн пекех тата Румынире тытса чарнӑ тата Румынире ирӗксӗрлесе илсе кайнӑ граждӑнсене, хӑйсен тӑван çӗршывӗсене тавӑрас шутпа, Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин аллине халех параççӗ.

Çак условисене алӑ пуснӑ вӑхӑтран тытӑнса малашне çав граждӑнсене хӑйсен çӗршывӗсене тавӑриччен, советӑн тата союзниксен тыткӑна лекнӗ мӗнпур çар çыннийӗсене, çавӑн пекех ирӗксӗрлесе илсе кайнӑ тата тытса чарнӑ граждӑнсене, вӑрçӑ пыракан вырӑнсенчен куçарса кайнӑ тата куçса кайнӑ çынсене Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ хӑйсен шутӗнчен кирлӗ чухлӗ апатçимӗçсем, тумтирсем, санитари ыйтнӑ пек тивӗçлӗ медицина пулӑшӑвӗ, çавӑн пекех вӗсене тавӑрнма транспорт хатӗрӗсем тупса пама пулаççӗ.

6. Пӗрлешнӗ Нацисене усӑ кӳрес тесе ӗçленӗшӗн е вӗсем Пӗрлешнӗ Нацисен ӗçне кӑмӑлланӑшӑн е тата вӗсем мӗнле нациран тухнине кура хупса лартнӑ мӗнпур çынсене, вӗсем мӗнле çӗршывӑн граждӑнӗсем тата мӗнле нациран тухнӑ çынсем пулнине пӑхса тӑмасӑр, Румыни Правительстви халех ирӗке кӑларать, çавӑн пекех тата тӗрлӗрен нацисене хӗсӗрлекен кирек мӗнле законсене те тата çав законсенчен тухса тӑракан хӗсмелли тӗрлӗ майсене те пӑрахӑçа кӑларать.

7. Германипе унӑн сателличӗсен Румыни территорийӗ çинчи мӗнпур çар пурлӑхӗсене, çав шутра Германипе унӑн сателличӗсен флочӗн Румыни шывӗсенче тӑракан суднисене те, вӗсене трофейсем вырӑнне хурса, Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин аллине пама пулаççӗ.

8. Германипе Венгрин е вӗсен граждӑнӗсемпе çыннисен, Румыни территорийӗ çинче е вӗсем хӑйсем йышӑннӑ территорисем çинче пурӑнаканскерсен, кирек мӗнле пурлӑхӗсене те (вӑл шутра хаклӑ йышши япаласемпе валютӑна та), Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани ирӗк памасӑр, Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ Румынирен илсе тухса каймалла мар тума е çав япаласене туртатурта илмелле мар тума пулаççӗ.

9. Пӗрлешнӗ Нацисен суднисене е вӗсен пулнӑ суднӑсене, халӗ Румыни порчӗсенче тӑраканскерсене, çав суднӑсем кӑмӑн аллинче шутланса тӑнине пӑхмасӑр, пурне те вӗсемпе Союзниксен пӗрлӗхлӗ интересӗсемшӗн Германипе Венгрие хирӗç вӑрçнӑ вӑхӑтра усӑ курма, Румыни Правительствипе Румынин Главнӑй Командованийӗ Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани аллине пама пулаççӗ, кайран çав суднӑсене хӑйсен хуçисене тавӑрса параççӗ.

Çӳлерехре кӑтартса панӑ пурлӑхсене Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани аллине паричченех вӗсене мӗнле те пулин сиенлесе пӗтерсе тӑкнӑшӑн Румыни Правительстви пӗтӗмӗшпех хӑй материальнӑй ответ тытать.

10. Румыни Правительстви Союзлӑ (Совет) Главнокомандованине, унӑн ӗçӗсене туса пыма кирлӗ таран, Румыни валютипе шутласа йӗркеллӗ укçа тӳлесе тӑма тивӗçлӗ, çавӑн пекех тата, кирлӗ чухне, Румыни территорийӗ çинче промышленноçпа транспорт предприятийӗсемпе, çыхӑну хатӗрӗсемпе, энерги паракан станцисемпе тата предприятисемпе, общество усӑ куракан çуртйӗрсемпе, топливо, продовольстви тата ытти материалсен запасӗсемпе, Союзлӑ (Совет) Главнокомандовани кӑларнӑ инструкцисем тӑрӑх, усӑ курма май туса парать тата пулӑшу парса тӑрать.

Румынин хӑйӗн шывӗсенче, çавӑн пекех тата ютçӗршывсен шывӗсенче тӑракан суту-илӳ суднисем, вӗсемпе Союзниксен пӗтӗмӗшлӗ интересӗсемшӗн усӑ курас шутпа, Союзлӑ (Совет) Главнокомандованин оперативнӑй контрольне пӑхӑнса тӑмалла пулать.

(*Юлашки 2-мӗш страницӑра*).

Совет Союзӗн Маршалӗ
С. К. Тимошенко

Совет Союзӗн Маршалӗ
Ф. И. Толбухин

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне С. К. Тимошенкӑна 1-мӗш степень Суворов орденӗпе наградӑласси çинчен

Верховный Главнокомандованин боевой заданийӗсене ӑнӑçлӑн пурнӑçа кӗртсе пынӑшӑн Совет Союзӗн Маршалне Семен Константинович **Тимошенкӑна** 1-мӗш степень **Суворов** орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. **КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. **ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1944 çулхи сентябрӗн 12-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Арми генералне Ф. И. Толбухина çар званийӗ— Совет Союзӗн Маршалӗ ятне парасси çинчен

Арми генералне Федор Иванович Толбухина çар званийӗ — Совет Союзӗн Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. **КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. **ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1944 çулхи сентябрӗн 12-мӗшӗ.

Совет Союзӗн Маршалне Р. Я. Малиновские Маршал палли—„Маршал Çӑлтӑрӗ“ пани

Ӗнер, сентябрӗн 13-мӗшӗнче, Кремльте СССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ М. И. Калинин юлташ Совет Союзӗн Маршалне Родион Яковлевич **Малиновские** Маршал палли — «Маршал Çӑлтӑрӗ» панӑ.

* * *

Çав кунах М. И. Калинин авиаци Маршалне **Ф. А. Астахова**, авиаци Маршалне **Г. А. Ворожейкина** тата авиаци Маршалне **Н. С. Скрипкӑна** Маршал палли — «Маршал Çӑлтӑрӗ» панӑ.

Çавӑнпа пӗрлех тата фашистла нимӗç захватчикӗсене хирӗç пынӑ çапӑçусене пӗлсе тата хастарлӑн ертсе пынӑшӑн тата çав ӗçсене пула тунӑ çитӗнӳсемшӗн авиаци Маршалне **Ф. А.** Астахова 1-мӗш степень **Кутузов** орденӗ панӑ.

СССР Верховный Совечӗн Президиумне

Пире Совет Союзӗн орденӗсемпе наградӑланӑшӑн хамран тата наградӑланӑ генералсемпе офицерсен ячӗпе Сире чунтанчӗререн тав тӑватӑп.

Çак аслӑ наградӑшӑн Югослави халӑхӗн ирӗклӗх çарӗ çеç мар, пирӗн пур халӑхсем те савӑнса тав тӑваççӗ, мӗншӗн тесен вӑл тӑванла аслӑ Совет Союзӗ пирӗн халӑхсем нимӗç фашизмне хирӗç кӗрешнине пысӑка хунине кӑтартать.

Югослави халӑхӗн ирӗклӗх çарӗпе партизанла отрядсен главнокомандующийӗ Маршал ТИТО.

1944 çулхи сентябрӗн 9-мӗшӗ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ Даниил Семенович **Солод** юлташа Совет Союзӗн Сирири тата Ливанри чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посланникӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем пĕр енчен тата Румыни Правительстви тепĕр енчен пулса пĕр-пĕринпе перемири çинчен тунă КИЛĔШӲ

(Юлашки)

11. Вăрçă ĕçĕсемпе тата Румыни совет территорине оккупациленипе Совет Союзне кӳнĕ тăкаксене Румынин Совет Союзне тӳлемелле пулать, çакăнпа пĕрлех, Румыни вăрçăран ахаль кăна тухманнине, çапла вара вăл, Германипе Венгрие хирĕç вăрçма тытăнса, тĕрĕссипех вăрçнине шута илсе, килĕшӳ тăвакан енсем çапла калаçса татăлаççĕ: асăннă тăкаксене Румыни пĕтĕмĕшпех мар, пĕр пайне кăна тӳлет, уйрăмăн илсен: Америка долларĕпе шутласа 300 миллион доллар чухлĕ ултă çул хушши таварсем (нефть продукчĕсем, тĕштырă, йывăç материалĕсем, тинĕс çинче тата юханшывсем çинче çӳрекен суднăсем, тĕрлĕ йышши машина оборудованийĕсем тата ытти çавăн пек япаласем) парса тăрса, тӳлесе татать.

Румыни ытти союзлă государствăсен харпăрлăхне тата çав государствăсен Румынире пурăннă граждăнĕсене вăрçă вăхăтĕнче кӳнĕ тăкаксене те тӳлесе татать, анчах мĕн чухлĕ тӳлемеллине каярахпа палăртса параççĕ. (11-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

12. Совет Союзĕн территорийĕ çинчен вăрçă вăхăтĕнче илсе тухса кайнă мĕнпур хаклă япаласемпе материалсене, государство, общество тата коопераци организацийĕсен, предприятисемпе учрежденисен е уйрăм граждăнсен мĕнпур хаклă япалисемпе материалĕсене, уйрăмăн илсен: фабрикăсемпе заводсен оборудованийĕсене, паровозсене, чугун çул вагонĕсене, тракторсене, автомашинăсене, историллĕ памятниксене, музейсенчи хаклă япаласене тата ытти тĕрлĕ пурлăхсене Румыни Правительстви Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăтартнă сроксенче Совет Союзне пĕтĕмĕшпех юсавлăн таварса пама пулать.

13. Румыни Правительстви Румыни территорийĕ çинче мĕнпур Пĕрлешнĕ Нацисен тата вĕсен граждăнĕсен пĕтĕм законлă прависемпе интересĕсене, вĕсем вăрçăччен мĕнле пулнă çаплипех, юсаса йĕркене кĕртме, çавăн пекех тата вĕсен пурлăхĕсене те пĕтĕмĕшпех юсавлăн каялла таварса пама пулать.

14. Вăрçăра тунă преступленисемшĕн айăплă çынсене тытса чарас тата вĕсене суд тăвас ĕçре Румыни Правительствипе Румынин Главнăй Командованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованипе пĕрле ĕçлеме пулаççĕ.

15. Румыни Правительстви Румыни территорийĕ çинчи мĕнпур гитлерла (фашистла) организацисене — политика тата çар организацийĕсене, çар майлă туса йĕркеленĕ организацисене, çавăн пекех ытти организацисене те, Пĕрлешнĕ Нацисене хирĕç, уйрăмах Совет Союзне хирĕç тăшманла пропаганда саракансене, салатса яма, малашне вара çавăн йышши организацисем пачах та пулмалла мар туса хума сăмах парать.

16. Румынире куллен тата вăхăтран вăхăта тухакан литературăна кăларасси, ăна сарасси, театрсемпе киносем кăтартасси, радиостанцисем, почта, телеграфпа телефон ĕçлесси Союзлă (Совет) Главнокомандованипе килĕштернĕ тăрăх пулса пырать.

17. Румынири граждăнла администрацине (вырăнти условисене кура) фронт линийĕнчен 50—100 километр аяккарахра тăракан мĕнпур Румыни тăрăхĕнче çĕнĕрен ура çине тăратса йĕркелесе яраççĕ, çакăнпа пĕрлех, мирпе хăрушсăрлăха йĕркелес шутпа, Союзлă (Совет) Главнокомандовани çак перемири условийĕсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе панă инструкцисемпе кăтартусене Румынин администрациллĕ органĕсем пурнăçласа пыма пулаççĕ.

18. Мир тăваччен çак условисене мĕнле пурнăçласа пынине вăхăтлăха йĕркелесе тата контроллесе тăма Союзниксен Контроль Комиссине тăваççĕ, ăна Союзлă державăсен ячĕпе ĕçлекен Союзлă (Совет) Главнокомандовани пĕтĕмĕшлĕн ертсе, ĕçре кăтартусем парса пырать. (18-мĕш статья çумне Хушса çырнине пăхăр).

19. Союзлă Правительствăсем Венăри Арбитражăн решенийĕсем пăрахăça тухнă тесе шутлаççĕ, Трансильванине (пĕтĕмĕшпех е ытларахăш пайне) Румыни аллине таварса парассипе килĕшеççĕ, çакна ăна мир тунă чухне çирĕплетмелле пулать, кунпа пĕрлех çав ĕçре Германипе Венгрие хирĕç туса пыракан вăрçă операцийĕсене Совет çарĕсене Румынипе пĕрле хутшăнтармаллă тăвассипе Совет Правительстви килĕшет.

20. Çак условисем вĕсене алă пуснă самантран пуçласа законлă пулса тăраççĕ.

Килĕшĕве Мускавра, тăватă экземпляр, кашнине вырăс, акăлчан тата румын чĕлхисемпе çырнă, çавăнпа пĕрлех вырăс тата акăлчан чĕлхисемпе çырнă текстсем чăн-чăн тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

1944 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕ.

ССР Союзĕн,
Пĕрлешӳллĕ Королевствăн
тата США-н Правительствисем
полномочи панипе—МИЛИНОВСКИЙ.

Румыни Правительствипе
Румынин Главнăй Командованийĕ
полномочи панипе—Л. ПАТРАЩКАНУ,
Д. ДАМАЧАНУ,
Б. СТИРБЕЙ,
Г. ПОПП.

Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем пĕр енчен тата Румыни Правительстви тепĕр енчен пулса пĕр-пĕринпе перемири çинчен тунă килĕшӳ çумне

ХУШСА ÇЫРНИСЕМ

а) 2-мĕш статья çумне хушса çырни

Германипе Венгрин Румыни территорийĕ çинче пурăнакан граждăнĕсене тытса чармалли мерăсем, Килĕшĕвĕн 2-мĕш статьи тăрăх пăхнăскерсем, çав çĕршывсенчи еврей национальноçĕнчен тухнă граждăнсене пырса тивмеççĕ.

б) 3-мĕш статья çумне хушса çырни

Килĕшĕвĕн 3-мĕш статьинче Румыни Правительствипе Румынин Главнăй Командованийĕ Союзлă (Совет) Главнокомандованине пулăшасси çинчен каланă, çакă вăл перемири вăхăтĕнче вăрçă ĕçĕсем валли кирлĕ пулма пултаракан çар сооруженийĕсене, сывлăш-çар тата тинĕс-çар сооруженийĕсене, портсене, гаваньсен, казармăсен, складсен, аэродромсен çуртйĕрĕсене, çыхăну хатĕрĕсене, метеостанцисен хатĕрĕсене, вĕсене ĕçлеме кирлĕ персоналпа пĕрлех, Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине, вĕсемне хăйне кирлĕ пек усă курма, пĕтĕмĕшпех юсавлăн парассине пĕлтерет.

ц) 10-мĕш статья çумне хушса çырни

Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăларнă валютăна, Румыни территорийĕнче çӳрекенскерне, Румыни правительстви, Союзлă (Совет) Главнокомандовани кăтартса панă сроксенче тата вăл кăтартса панă условисем тăрăх, пĕтĕмпех пухать е сутăн илет, çав майпа пухнă валютăна вара пĕр тӳлевсĕрех Союзлă (Совет) Главнокомандованин аллине парать.

д) 11-мĕш статья çумне хушса çырни

Çак килĕшĕвĕн 11-мĕш статьи тăрăх вăрçă тăкакĕсене Америка долларĕпе шутласа тӳлемелле тунă; Америка долларĕ çак килĕшĕве алă пуснă кун тĕлне ылттăнпа шутласан мĕн хак тăнине, урăхла каласан, ылттăнăн пĕр унцийĕ 35 доллар тăнине шута илнĕ.

е) 16-мĕш статья çумне хушса çырни

Румыни Правительстви çапла тума сăмах парать: радиопа çыхăну тытса тăрасси, телеграфпа тата почтăпа çырусем çӳретесси, Румынире тăракан посольствăсемпе миссисем тата консульствăсем шифрсемпе çырса тăрасси, курьерсем ярса тăрасси, çавăн пекех тата ют çĕршывсемпе телефон тăрăх çыхăнса тăрасси Союзлă (Совет) Главнокомандовани тунă йĕрке тăрăх пулса пымалла.

ф) 18-мĕш статья çумне хушса çырни

Перемири çинчен тунă килĕшĕвĕн 18-мĕш статьи тăрăх организациленĕ Союзниксен Контроль Комиссийĕ çине перемири условийĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынине контроллесе тăрас ĕçе хураççĕ.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ панă пур кăтартусене те, перемири çинчен тунă Килĕшӳрен тухса тăраканскерсене, Румыни Правительствипе унăн органĕсем пурнăça кĕртсе пыма тивĕçлĕ.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ ятарласа хăйĕн органĕсемпе секцийĕсене тăвать, вĕсене хăйсене кура тивĕçлĕ ĕçсем хушса парать. Кунсăр пуçне Союзниксен Контроль Комиссийĕ Румынин тĕрлĕ вырăнĕсенче хăйĕн офицерĕсене тытса тăма пултарать.

Союзниксен Контроль Комиссийĕ Бухарест хулинче вырнаçса тăмалла пулать.

Мускав, 1944 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕ.

Всевобуч виçĕ çул тултарать

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче всевобуч организацилени виçĕ çул тултарать. Столицăри мĕнпур районсенче тата вĕренӳ пункчĕсенче çав куна ирттерме вăйлăн хатĕрленеççĕ. Мускав районĕсенчен нумайĕшĕ автоматчиксен, пулеметчиксен, танк истребителĕсен тата ытти специальноçсен черетлĕ подразделенийĕсене срокчен 10—12 кун малтан вĕрентсе кăларнă. Елĕкрех вĕрентсе кăларнипе танлаштарсан, халь вăрçăпа физкультура тĕлĕшпе хатĕрлес ĕç çине уйрăмах хытă çаврăнса пăхаççĕ. Подразделенисенчи боецсен 95 проценчĕ ГТО значекĕн нормисене панă. Ростокински, Коминтерновски, Тагански, Киевски районсенчи подразделенисен боецĕсем çав куна срокчен хатĕрленсе çитнĕ.

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Мускавра парад пулать тата «Мускав всевобучĕн чемпионĕ» ятне илме çарпа физкультура ăмăртăвĕ пулса иртет. (ТАСС).

ҪАШНИ КУН—ТЕМИÇЕ ВУНА ÇĔНĔ ÇУРТ

Смоленск облаçĕнче кашни кун темиçе вунă çурт тăваççĕ. Кăçал 8 уйăх хушшинче ялсенче 19,5 пин çурт туса лартнă е юсанă. Хĕрлĕ Ялавлă Демидовски районра нумай колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă хыççăн пĕр çул хушшинче гитлеровецсем ишсе хăварнă ялсенчи çуртсене çурри ытла çĕнĕрен лартнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛОМЖА хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, темиçе ял тытса илнĕ.

Румынире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, малалла куçнă, МЕРКУРЯ-ЧИУКУЛУЙ хулине (çурçĕрти Трансильванире), БДАЖ хулине, АЙУД хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — САС-СКЕД, ЦИКМАНТОР, САУКА, ДИЧЭ-СЕНТ МАРТОН ятла пысăк ялсем тата ХОМОРОД, КАЦА, ПАЛОШ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

СЕНТЯБРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем вăйлă çапăçнă хыççăн нимĕçсен НАРЕВ шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — ЛОМЖА хулипе крепоçне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛОМЖИЦА, БОЖЕНИЦЫ НОВЕ, БОЖЕНИЦЫ СТАРЕ, КУПИСКИ, ГЖИМАЛЫ-НОВОГРУДСКЕ, ЯНКОВО, ЧАРТОРИЯ, РЫБАКИ, ДРОГОШЕВО, ЛЯСКОВЕЦ.

ВИСЛА шывĕн сылтăм хĕрринчи ПРАГА районĕнче пирĕн çарсем тăшманпа хаяррăн çапăçаççĕ. Унта Польшăн 1-мĕш çарĕн чаçĕсем те çапăçаççĕ.

ЖЕШУВ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн КРОСНО хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, çав шутра — МОДЕРУВКА, ЕДЛИЧЕ, ПОТАКУВКА, ЛУБНО-ШЛЯХЕЦКЕ, ФАЛИШУВКА, НЕНАШУВ, КОБЫЛЯНЫ, ГЛОЙЕЦЕ, ИВЛЯ, МЫСЦЕВО, КРЕПНА, ВЫШОВАЛКА, ЦЕХАНЯ, ПОЛЯНЫ, РУВНЕ, РОГИ, ИВОНИЧ, ТАРГОВИСКА, ВРУБЛИК, КРУЛЕВСКИ, НЕБЕШАНЫ, ЗБОЙСКА, БЕЛХУВКА, ЧАШИН, ПОРАЖ, ЗАГУЖ, ВЕЛЕПОЛЕ ятлă пысăк ялсем тата ЕДЛИЧЕ, ИВОНИЧ, ЗАГУЖ, МОКРЕ ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем Польшăпа Чехословакин государство чиккине тухнă.

Румынин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн нимĕçсемпе венгерсен Карпат тăвĕсем хушшинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне КЫМПУЛУНГ хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата САДОВА, ФУНДУЛ МОЛДОВИ, ПОЗОРИТТА, КОЖОЧИ ялĕсене йышăннă.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ОДОРХЕЙ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ДЬЕРДЬО-ВОШЛАБ, СЕНТ-ДОМОКОШ, ИНЕУ, РАКУЛ, ЗЕТЕЛАКА, МАРЕФАЛВА, МЕРЕШТЬ, МАРТИНИШ, ОЦЕНЫ, ТАУРЕНЫ ятлă пысăк ялсем тата ВОШЛАБ, ТОМЕШТИ, ЧИК-МАДАРАШ, РАКУЛ, ТАУРЕНЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 30 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем паян Ломжа хулипе крепоçне туртса илнĕ. Ломжа патĕнчи çирĕплетнĕ район тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕмелли çулсем çинчи чи хăватлă оборона узелĕсенчен пĕри пулнă. Унта оборонăн икĕ унки пулнă—тулашĕнчи тата шалти. Çак икĕ тĕп позици хушшинче нимĕçсем тата хушăри позицисем туса тултарнă, танксене хирĕç тарăн шăтăк алтса тухнă, çак шăтăк пĕтĕм хулана тата унпа юнашар ларакан ялсене те çаврăрса илнĕ. Юлашки кунсенче тăшман Ломжа патĕнчи çирĕплетнĕ районăн ахаль те пысăк гарнизонне танксем тата хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем парса вăйлăлатнă. Вăйлă çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсен оборонине çура-çура кĕнĕ, вĕсен позицийĕсене тата-тата пăрахнă. Вара çав тери хăвăрт атакăласа, совет чаçĕсем Ломжа хулине хĕвеланăç енчен хӳтĕлесе тăракан форта йышăннă. Пирĕн боецсем хăваласа пынă нимĕçсем хулана чакнă. Çĕрĕпех хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн отрядсем гитлеровецсене утăм хыççăн утăм дзотсемпе хӳтлĕхсенчен хĕсе-хĕсе кăларнă. Паян ирхине совет çарĕсем Ломжа хулипе крепоçне пĕтĕмĕшпех йышăннă. Нимĕçсен Ломжа патĕнчи аркатса тăкнă группировкин юлашкийĕсене Нарев шывĕн леш енне хăваласа янă. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухату тӳстернĕ. Çапăçусем пулса иртнĕ вырăнсем гитлеровецсен виллисемпе тулса ларнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Жешув хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Тăшман траншейисен темиçе линине çĕмĕрсе тăкнă хыççăн совет чаçĕсем Вислок шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕ тата çулсен пысăк узелĕ пулса тăракан Кросно хулишĕн çапăçма пуçланă. Нимĕçсен гарнизонĕ питĕ хытă хирĕç тăнă, анчах çапах та ăна аркатса тăкнă. Кросно хулине илнĕ хыççăн пирĕн çарсем, тунă çитĕнĕве вăйлатса пырса, кăнтăр еннелле кайма пуçланă. Нимĕçсен командованийĕ ку района васкасах хăйĕн пехотипе танкĕсен тата хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен пысăк вăйĕсене куçарса пынă. Контратакăсем туса, тăшман пирĕн çарсене малалла кайма чарса лартма хăтланнă. Ивля ялĕ патĕнче пуринчен те хаяртарах çапăçусем пулса иртнĕ. Туллă сăртлă вырăн тата çумăр çуса кайни совет чаçĕсене çапăçма питĕ хытă кансĕрленĕ. Çапах та пирĕн çарсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та 3.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 15 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 37 бронетранспортер тата 30 тупă ытла пĕтерсе тăкнă. Татса кĕнĕ вырăна совет танкисчĕсем, пехотинецĕсем, кавалерисчĕсем кĕрсе кайнă, вĕсем хăйсен çулĕ çинчи тăшмана аркатса пырса, Польшăпа Чехословакин государство чиккине тухнă.

Санок хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, 10 километр малалла кайса, халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Туллă-вăрманлă вырăнпа усă курса, тăшман кунта çирĕп оборона туса хунă. Совет отрячĕсем вăрманти утма çулсемпе тата тусем хушшинчи çырмасемпе малалла куçса пырса, гитлеровецсене вăйлă çирĕплетнĕ пунктсенчен хăвала-хăвала кăлараççĕ. Мокре ятлă чугун çул станцийĕ районĕнчи вăрманта пулса иртнĕ çапăçура пирĕн чаçсем тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, боеприпассен икĕ пысăк складне туртса илнĕ. Çакăнти çапăçусенче нимĕçсен 96-мĕш пехотнăй дивизине, çавăн пекех тата тăшманăн ытти чаçĕсене те аркатса тăкнă.

* * *

Румынин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Кымпулунг хулине туртса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен оборонин çак тĕреклĕ пункчĕ хĕвелтухăç Карпат тăвĕсем урлă каçмалли çулсене хӳтĕлесе тăнă. Тăшман кунта хăйне совет çарĕсем хĕвелтухăç енчен пырса çапасса кĕтнĕ курăнать, çавăнпа вăл унта хăйĕн тĕп вăйĕсене пухса тăратнă. Анчах та пирĕн чаçсем тăшмана аякран кайса çаврăрса илнĕ те унăн каялла чакмалли çулĕсене пурне те татнă. Хаяр çапăçура тăшман гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсемпе венгерсен хирĕç тăма пăрахнă пĕр пĕчĕк пайне тыткăна илнĕ.

* * *

Крустпилс хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман пирĕн ĕнер Мемель шывĕн çурçĕр енне каçнă разведка отрячĕсене каялла ывăтса ярасшăн пулнă, темиçе хут та контратака тунă. Нимĕçсем умлăн-хыçлăн тăватă хут атака тунă, пирĕн отрядсем нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Совет боецĕсем хăйсем йышăннă позицие çирĕп тытса тăраççĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 6.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

Чурачăк районĕ тырă вырса пĕтерчĕ

ЧУРАЧĂК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра районри колхозсем тырă вырса пĕтерчĕç. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 17.838 гектар вырса, плана ытлашшипех тултарчĕç. Нумай колхозсем кĕлте кӳрес ĕçре кăнтăрла кăна мар, çĕрле те пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç. Кĕлтесене 70 процент капана хывса пĕтернĕ. 16 колхоз ку ĕçе вĕçлерĕç. «Стахановец», «Пучах», «Красная Чувашия», «Заря», «Восток», «Первое мая», Партин 17-мĕш с'езчĕ ячĕпе тăракан колхозсем кĕлте кӳрсе пĕтернĕ, вунăкунлăхра авăн çапса пĕтерессишĕн пикенсе ĕçлеççĕ. «Шумашар», «Пучах», «Победа», Янчеллăри «Новая сила» колхозсем тырра çуррине ытла çапнă.

Государствăна тырă парса татнă колхозсем те нумай. «2-ая пятилетка», «Куканар», «Красный флот», «Шумашар», «Камай», «Новая сила», «Прогресс», «Победа» колхозсем пур культурăсене те государствăна парса татнă, халĕ 1945 çулшăн аванс шучĕпе тырă параççĕ. Вăрлăхлăх куракăсене районри колхозсем вырса пĕтернĕ теме пулать, уйрăм пĕчĕк лаптăксенче кăна пулса çитмен пирки юлкаланă, вĕсене те паян-ыран пухса пĕтереççĕ.

Тырă вырса пухас ĕçре массăллă ĕçе лайăх туса пыни те нумай пулăшрĕ. Колхозсенчи кашни бригадăра, кашни звенора агитаторсем ĕçленĕ, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тухса тăнă. Агитаторсем яланах колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ, вĕсем ыттисемшĕн пример пулса тăнă. «Победа» колхозри А. Савельева агитатор кĕлте кӳнĕ çĕрте хăйĕн ĕç нормине 200 — 240 процент таран тултарса пычĕ. Çав вăхăтрах вăл стена хаçатне виçĕ кунта пĕрре кăларса тăма ĕлкĕрчĕ. Янчеллăри «Новая сила» колхозра Захаров агитатор хăй çемьипе пĕр кун хушшинче пĕр гектар тырă вырса 25 çĕмел тунă. Ĕç нормине унăн çемьи икĕ хут ытла тултарса ĕçлерĕ.

Анчах та районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Уйрăмăнах «Оборона», Тукаль ялсоветĕнчи «Большевик», Буденный тата Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем ыттисенчен юлса пыраççĕ. «Оборона» колхозра (председателĕ Григорьев юлташ) парторганизаци те пур. Анчах та парторганизаци секретарĕ Архипова юлташ колхоза ертсе пымасть. Колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне тумасть. Тырă вырса пĕтернĕ, халĕ ĕнтĕ кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле. Çак ĕçсенче коммунистсен ытти колхозниксемшĕн пример пулса тăмалла.

В. КРАСНОВ,
ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

ВĂРЛĂХШĂН ÇУРКУННЕ МАР, ХАЛĔ ТĂРĂШМАЛЛА

ЭЛĔК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуркунне тырă акса пĕтернĕ хыççăн пур колхозсенче те вăрлăх участокĕсем уйăрчĕç, вĕсен çумне уйрăм звеносем çирĕплетрĕç. Çак звеносем вăл участоксене çумкуракĕсенчен тасатса тăчĕç тата ытти ĕçсем те турĕç.

Анчах та тырпулсене вырма тухсанах нумай колхозсем вăрлăхлăх участоксем çинчен манса кайрĕç, унта ĕçленĕ звеносем те ыттисемпе пĕрлешсе ĕçлерĕç. Вăрлăх участокĕсем хут çинче кăна юлчĕç.

Акă, сăмахран, «Сталинит», «Новый путь», «Серп и молот», Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăхлăх уйăрнă участоксенчен вырса кĕртнĕ тырăсене ытти тырăсемпе пĕрлех çапаççĕ. Вĕсене уйрăм амбара хумаççĕ. Татмăшри Молотов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх участокĕнчи тырă ăçта иккенне те пĕлмеççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче, вăрлăх участокĕсенчи тырра уйрăмăн пухса илнĕ пулсан та, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре салатаççĕ. «Первое мая», «Комбайн» колхозсенче вăрлăхлăх участоксенчен пухса илнĕ тырра пĕрлешӳллĕ столовăя валли янă, е колхозниксене аванс шучĕпе уйăрса панă.

Вăрлăхлăх тырăшăн çуркунне мар, халĕ тăрăшса ĕçлемелле. Ăна тасатса хумалла тата лайăх сыхламалла.

Х. ЛИСИН.

Паян ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призыв пуçланать

Паян хуласемпе ялсенчи çамрăксене ремесленнăй тата чугун çул училищисене, ФЗО шкулĕсене вĕренме илес тĕлĕшпе призыв пуçланать. Призыв октябрĕн 15-мĕшĕччен пымалла. Çак тапхăрта совет çамрăкĕсене 350 пин çынна квалификациллĕ рабочисем пулма вĕренме илмелле.

Государствăн ĕç резервĕсен системи пирĕн паттăр рабочи класс йышне ӳстермелли шанчăклă çăлкуçĕ пулса тăрать. Ĕç резервĕсен училищисемпе шкулĕсем вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче çĕршыв валли 1 миллион та 800 пин рабочипе работница вĕрентсе хатĕрлесе пачĕç. Вĕсенчен ытларахăшĕсем халĕ промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, строительствăсенче, фашистла захватчиксем ишĕлтернĕ хуçалăха юсанă çĕрте хăйсен пултарулăхне кăтартса ĕçлеççĕ. Училищĕсемпе ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксем, ватă рабочисемпе пĕрле Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем, боеприпассем туса, поездсене илсе çӳресе, хăйсен çамрăк хастарлăхне нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре параççĕ.

Училищĕсемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илес ĕç вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ответлă ĕçе пурнăçа кĕртессине ĕççынни депутачĕсен исполкомĕсем çине хунă. ССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, призыва ирттерес тĕлĕшпе комиссисем ĕçлемелле, вĕсене ĕççынни депутачĕсен исполкомĕсен председателĕсем ертсе пымалла. Комиссисен хисеплĕ задачи — вĕренме илмелли плана ăнăçлăн тултарасси пулать. Çавăнпа та призыва пур енчен те лайăх организацилени кирлĕ.

Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем умĕнче пысăк ответлăх тăрать. Вĕсен ĕççынни депутачĕсен совечĕсене призыва лайăх ирттерме пулăшмалла, çамрăксене училищĕсемпе шкулсене йышăнса илме хатĕрленме, вĕренӳпе воспитани ĕçне тĕрĕс йĕркелеме тăрăшмалла. Чăн та, республикăри училищĕсемпе шкулсенчен чылайĕшĕсем вĕренӳ ĕçне тытăнма начар мар хатĕрленнĕ. Çапла, Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ, Сĕнтĕрвăрринчи 4-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕсем, Улатăрти чугун çул училищи общежитисене, вĕренӳ кабинечĕсене, мастерскойсене, хĕрлĕ кĕтессемпе клубсене тирпейлĕн юсаса хатĕрленĕ. Çавăн пекех çĕнĕрен уçăлакан Çĕмĕрлери училищĕне те начар мар хатĕрленĕ. Унта библиотека, хĕрлĕ кĕтессем, клуб, столовăй, лайăх общежитисем пур, культурăпа музыка/хатĕрĕсем сахал мар.

Анчах та тунă ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть. Училищĕсемпе шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелес тесен, мĕнпур кирлĕ хатĕрсене малтанах тупса хумалла. Çавăнпа та шкулсем мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухса, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле тăвас пулать. Училищĕсемпе шкулсенче ĕçлеме кадрсем суйласа илесси çинчен те манма юрамасть.

Пирĕн совет государстви кадрсем хатĕрлес ĕçе яланах пысăк вырăна хурать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр вăхăтра та вăл училищĕсемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илнĕ çамрăксене тӳлевсĕр вĕрентет кăна мар, вĕсене лайăх тумтирсем, апат-çимĕç, вĕренӳ хатĕрĕсем, пурăнма ăшă та çутă çуртсем парать. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен çавăн çинчен çамрăксене тата пĕтĕм ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Çамрăксене училищĕсемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илесси—пĕтĕм государствăшăн кирлĕ ĕç пулса тăрать. Партипе совет, комсомол, профсоюз организацийĕсем тата хуçалăх руководителĕсем тимлĕн тăрăшсан, çав ответлă ĕçе лайăх организацилесе ирттерме пултаратпăр. Призыва организованно ирттерсе, мухтавлă Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳсем тума тĕрек парса тăракан совет тылĕ валли квалификациллĕ кадрсем йышлăн хатĕрлеме пулăшар.

Р. СИДЮХИН,
Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервисен Управлени начальникĕн заместителĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Германипе Люксембург хушшинчи чикĕ урлă каçса кайнă тата çав районран кăнтăртарахра кăнтăр Франциирен пырса çитнĕ çарсемпе пĕрлешнĕ. Мозель шывĕн улăхĕнче тăшман çаплах питĕ вăйлă хирĕç тăнă. Çав районран çурçĕртерехре союзниксен Германи чикки урлă маларах каçса кайнă йышлă вăйĕсем хальхи вăхăтра Трир хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăраççĕ. Люксембург хулине ирĕке кăларнă çарсем союзниксен çарĕсене Мерс хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре чарса лартма тăрăшакан тăшманпа çапăçаççĕ. Льеж хулинчен кăнтăртарахра малалла куçнă çарсем Герре хулипе Эвэрен хули хушшинчи çул урлă каçса кайнă. Союзниксем Льеж хулинчен 10 мильăра ларакан Герв хулине йышăннă. Тăшман вăйлă хирĕç тăнă пулин те, Альберт каналĕ районĕнче тунă укреплениcене аслăлатнă. Гент хулинчен хĕвелтухăçнерехре Локарен тата Сен-Никола хулисене ирĕке кăларнă. Кале хулипе Гри-Не сăмсахĕ хушшинчи районра Висан хулипе Сангатт хулине йышăннă.

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Мец хулипе Тионвиль хули хушшинчи районри батарейисене тата çирĕплетнĕ пункчĕсене пыра-пыра тапăннă, тăшманăн Саарбрюккен хулипе Кельн хули хушшинчи чугун çул объекчĕсене атакăланă, çавăн пекех тата тăшманăн ытти объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Флоренци хулинчен çурçĕртерехре Англипе Америка çарĕсем икĕ мильăран пуçласа виçĕ мильăна çитиччен малалла кайнă та Сиеве шывĕн тури тăрăхĕнчен çурçĕртерехре пĕр çӳллĕ вырăна тытса илнĕ. 5-мĕшпе 8-мĕш армисем пĕтĕм фронт тăршшĕпех нумай тĕлте «Гот линийĕ» çинчи укреплениcем патне пырса тухнă.

Хĕвелтухăç Францире 7-мĕш арми 3-мĕш армипе çыхăннă. Халь вĕсем малалла çурçĕр еннелле куçса пыраççĕ. Çав районран тăшман хăйĕн çарĕсен юлашкийĕсене илсе кайма хăтланать. Çулйĕрсен паха центрне Дижон хулине йышăннă хыççăн француз çарĕсем вирлĕн наступлени туса пынă. Тăшман пĕртак хирĕç тăнине сирсе ярса, союзниксем Сомбернон хулине йышăннă.

Дижон хулинчен 40 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Отен таврашĕнче тăшман колоннисемпе тытăçса илнĕ хыççăн 3.200 çынна тыткăна илнĕ.

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Çурçĕр Италири çапăçусем пыракан районсенчи шоссе çулĕсемпе чугун çулсем çинчи кĕперсене, персе тăракан вырăнсене тата ытти объектсене те пыра-пыра тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ тата Югослави, Албани, Греци çинче кĕрешнĕ.

ГЕРМАНИН ГАВР ХУЛИНЧИ ГАРНИЗОНĔ ПАРАННА

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Канадăн 1-мĕш армийĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян 11 сехет те 30 минутăра Германин Гавр хулинчи гарнизонĕ Англи çарĕсене паранна, тет.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла «Ланкастер» тата «Галифакс» йышши бомбардировщиксем, «Спитфайр» тата «Мустанг» йышши истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Рур облаçĕнчи синтетически горючи тăвакан виçĕ завода тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла акăлчансен йывăр бомбардировщикĕсем Рур облаçĕнчи ĕнер атакăланă виçĕ заводран инçех мар вырăнта ларакан синтетически горючи тăвакан икĕ завода тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Ланкастер» йышши бомбардировщиксем Рейн облаçĕнчи промышленноçпа чугун çулсен центрне Дармштадт хулине йышлăн вĕççе пырса тапăннă.

«Москито» йышши самолетсем Берлина тапăннă.

БОЛГАРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СОФИЯ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгари министрĕсен совечĕ сентябрĕн 8-мĕшĕнче пĕтĕм çĕршывра вăрçăри пек лару-тăру туса хума йышăннă. Çак ĕçе, тенĕ Софири радио, Болгари Германипе вăрçакан çĕршыв шутланса тăнă пирки тунă. Правительство Болгари халăхне пĕрле пĕтĕçме, лăпкă та йĕркеллĕ пулма чĕннĕ.

София хулин коменданчĕ полицин мĕнпур служащийĕсене, хăйсен вырăнĕнчех юлса, халь тунă милицие пулăшма хушнă. Хăйсен учреждениине ĕçлеме пыман служащисене саботажниксем тесе шутламалла.

Учительсен профессиллĕ организацийĕсен вăхăтлăх руководстви мĕнпур болгар учителĕсене çĕнĕ правительствăна пулăшма чĕннĕ. Шоферсен профессиллĕ организацийĕн комитечĕ те тата почта, телеграф, телефон тата радио ĕçĕнче ĕçлекенсен профессиллĕ организацийĕсен вăхăтлăх руководстви те çавăн пекех чĕнсе каланă.

Сентябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа София хулинче «Свобода» ятлă хаçат тухма пуçланă.

СЛОВАКИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословакири çар влаçĕсен пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: Жилина — Врутки районĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Жилина хули Чехословаки патриочĕсен аллинче. Ваг шывĕн тури пайĕнче тăшман хĕвелтухăç енчен хĕссе пырать. Малалла тапăнса пыракан тăшман питĕ пысăк çухатусем тӳсет, Протонпа Толгарт районĕсем чехословаксен отрячĕсен аллинче. Хĕвелтухăç Словакире партизансем активлăн кĕрешни çинчен пĕлтереççĕ. Унта партизансен аллинче пысăк районсем тăраççĕ. Нимĕçсем усă куракан чугунçулсемпе шоссе çулĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех татса пăрахнă.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ НЕАПОЛЬ ХУЛИНЕ КУÇНĂ

КАИР, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Греци правительстви Каиртан Неаполе куçнă. Премьер-министр Папандреу тата правительство членĕсем Италие пырса çитнĕ ĕнтĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00691 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.